ЧПГĂИ ЙĔРКЕЛЕННĔРЕНПЕ – 95 ÇУЛ

Наукăпа тĕпчев анлăхĕ

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ йĕркеленнĕренпе 95 çул çитрĕ. Ăсчахсене саламлама институт уявне республика Пуçлăхĕ Олег Николаев та пычĕ.

Раççей Федерацийĕн Федераци Пухăвĕн Патшалăх Думин финанс рынокĕн комитечĕн председателĕ Анатолий Аксаков, Чăваш Республикин вĕрентӳ министрĕ Дмитрий Захаров, Чăваш Республикин Патшалăх Канашĕн Председателĕн çумĕ Виктор Горбунов тата И.Н.Ульянов ячĕллĕ ЧПУ ректорĕ Андрей Александров пулчĕç.

Институт директорĕ Юрий Исаев хăйĕн сăмахĕнче институт талпăнуллăн малалла аталанса пыни пирки каларĕ, çак ĕçре республика Правительстви, Вĕрентӳ министерстви пулăшса пынине палăртрĕ. Гуманитари хăрушсăрлăхĕн ыйтăвĕ çинче уйрăммăн чарăнса тăчĕ. «1934 çулта чăваш наукăпа тĕпчев анлăхĕнче пĕрремĕш пысăк пĕлтерĕшлĕ наука ĕçĕ пичетленсе тухнă. Унтанпа нумай-нумай наука ĕçĕ кун çути курнă, вĕсем пирĕн гражданла обществăна, культурăна аталанма пулăшаççĕ, – терĕ вăл. – Чăнлăхпа килĕшсе тăракан историе, чĕлхен, культурăн чăн шайне кашни çын патне илсе çитересси – пирĕн умри чи пĕрремĕш тĕллев», – тесе вĕçлерĕ хăйĕн сăмахне.

Олег Николаев ăсчахсен умĕнче тăракан тĕп тĕллевсене уçăмлатрĕ: «Эсир пурнăçлакан тĕпчев ĕçĕсем пирĕн авалхи йăхсен вăй-халĕнчен сĕткен илсе тăраççĕ. Вĕсен пурнăç тытăмĕ, еткерлĕхĕ çинче никĕсленнĕ ăс-хакăл юписем çинче ăслăлăх институчĕ малалла аталанса пырать. Институт историйĕпе тĕплĕн паллашнă майăн унăн тытăмĕнче, çул-йĕрĕнче нумай улшăну пулнине пĕлетĕп, анчах ертӳçĕсем пурте хăйсен ĕçĕн пĕлтерĕшне таса чунпа ĕненсе пурнăçланă – хамăрăн тăван халăхăн йăх тымарне тĕпчесе пĕлес, малалла çак ĕçе тата тарăнрах туса пырасси пулнă. Паянхи технологисем пархатарлă çак

ĕçе малалла аталантарма майсем туса параççĕ. Раççей Федерацийĕн Президенчĕ Владимир Владимирович Путин Раççей халăхĕсен аваллăхне, истори пуянлăхне çĕнĕ мелсемпе тарăнрах тĕпчесси пирĕн паянхи тĕллевсенчен пĕри тесе палăртать. Чăваш тĕрĕ ăстисем Раççейĕн тĕрĕллĕ карттине ăсталани еплерех пысăк та паха пĕлтерĕшлĕ ĕç пулса тăчĕ! Пирĕн авалхи чăваш руна паллисемпе китайсен иероглифĕсен хушшинче пĕр пеклĕх пурри те палăрчĕ».

Олег Алексеевич институт ĕçченĕсене – директор çумне, филологи ăслăлăхĕсен кандидатне Ирина Кирилловăна тата редакципе издательство пайĕн ертӳçине Алсу Семигуловăна ЧР Пуçлăхĕн Тав хутне тата алла çыхмалли сехет парнелерĕ.

Институт коллективне 95 çулхи юбилей ячĕпе Беларуç Наци наука академийĕн Истори институчĕн директорĕ Вадим Лакиза интернет урлă видеосалам ярса ăнăçу сунчĕ: «Сирĕн институт паянхи кун Тăван çĕршыв наукин чĕри пулса тăрать. Унăн ĕçĕнче – çĕнĕлле мелсем, инновациллĕ енсем, çĕнĕ проектсем, çакă ăна паянхи кун ыйтнă шайра хăюллăн ĕçлесе пыма, тарăн тĕпчевсем пурнăçлама май парать, Чăваш Республикин аталану çул-йĕрне пулăшса пырать. Эсир хăвăрăн коллективпа Чăваш Республикин, Раççей Федерацийĕн наци интересĕсене хӳтĕлес ĕçре сыхă тăратăр. Эсир – обществăн тата патшалăхăн гуманитари хăрушсăрлăхĕ. Паллах, çакă – сирĕн пысăк профессионаллă коллективăн тава тивĕçлĕ ĕçĕ. 95 çул хушши пухăннă сирĕн опыт, ученăйсен ăс-хакăл пуянлăхĕ – наука сумĕ-чысĕ пулса тăрать. Институт тивĕçлĕ çамрăк кадрсене хатĕрленине палăртмалла.

Пĕлтĕрхи юпа уйăхĕнче эпир те хамăрăн институт 95 çул тултарнине палăртрăмăр. Пирĕн институт – пысăк комплекслă патшалăх учрежденийĕ: археологи, истори, антропологи, геополитикăн пĕтĕмĕшле историн, халăхсен хутшăнăвĕсен енĕсемпе ĕçлетпĕр; историпе культура тата археологи еткерлĕхне тĕпчес енĕпе нумай проект пурнăçа кĕртетпĕр, халăх хушшинче саратпăр, кĕнекесем кăларатпăр. Çак тĕлĕшпе эпир сирĕнпе килĕшӳ тунă. Вăл пирĕн наукăна пысăк утăмсемпе аталанма май парĕ. Пирĕн умра – наукăпа тĕпчев ĕçĕн çĕнĕ тапхăрĕ».

Раççей наука академийĕн /РНА/ Тухăç институчĕн директорĕ Аликбер Аликберов тата РНА Чĕлхе пĕлĕвĕн институчĕн директорĕ Андрей Кибрик та видеоçыхăну урлă тухса каларĕç, пысăк çитĕнӳсем сунчĕç.

* * *

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕ – Чăваш Республикинчи чи ватă учрежденисенчен пĕри. Ăна 1930 çулхи çурла уйăхĕн 18-мĕшĕнче Шупашкар хулинче Чăваш комплекслă ăслăлăх тĕпчев институчĕ тесе йĕркелесе янă. Нумай профильлĕ çĕнĕ институт пуçламăш тапхăрта çак пайсенчен тăнă: промышленноçпа экономика, ял хуçалăх, культурăпа пурнăç йĕрки. Ăслăлăх библиотеки ĕçленĕ. 1931 çулхи авăн уйăхĕн 15-мĕшĕнче Чăваш АССР Халăх комиссариачĕн канашĕ Чăваш комплекслă ăслăлăх тĕпчев институчĕ çинчен положени çирĕплетнĕ, унта тĕллевсене, унăн структурине, персоналне, ĕçе йĕркелекен механизмне тата бюджетне палăртнă.

1933 çулхи чӳк уйăхĕн 15-мĕшĕнчен пуçласа раштавăн 15-мĕшĕччен институт республикăри 21 яла пĕтĕмĕшле тĕпченĕ. 1935 çулхи утă уйăхĕн 15-18-мĕшĕсенче учреждени чăваш чĕлхе пĕлĕвĕн ыйтăвĕсемпе пĕрремĕш хут конференци ирттернĕ, унта чăваш чĕлхин орфографийĕпе терминологине сӳтсе явнă. 1937



çулта тепĕр пысăк мероприяти – Чăваш тата Тутар АССРĕсенче лингвистика экспедицийĕ – иртнĕ, 23 районти 120 ял тĕпчеве хутшăннă.

* * *

Институтăн пĕрремĕш директорĕ Чăваш АССР Çут ĕç халăх комиссарĕ М.С.Сергеев пулнă. 1930 çулсенче ăслăлăх учреждениене В.А.Долгов, С.С.Кутяшов, А.С.Сергеева, Н.В.Васильев /Шупуççынни/, Н.А. Резюков, И.Я.Яковлев /Саламбек/ ертсе пынă. 1942-1963 çулсенче – П.Г.Григорьев, С.И.Ухватов, В.В.Чебухов, Т.Г.Гусев, И.А. Афанасьев, В.Н.Любимов, М.А.Андреев, 1963-1968 çулсенче – И.Д.Кузнецов, 1968-1988 çулсенче – В.Д.Дмитриев.

2010 çулсенче институт администрацийĕ ăслăлăх тĕпчев ĕç-хĕлне лайăхлатас, ытти наука центрĕсемпе туслă çыхăну çирĕплетес тĕлĕшпе çĕнĕ утăмсем тунă. 2014 çулта ЧПГĂИ археологĕсем тутар специалисчĕсемпе пĕрле Тутарстанра археологи экспедицийĕсем ирттернĕ. 2010-2013 çулсенче институт коллективĕ истори, этнологи, археологи, филологи, экономика, искусство, социологи тата ытти отрасльпе пурĕ 85 кĕнеке кăларнă, 97 ăслăлăх конференцийĕ, сессийĕ, анлă ларусем, «çавра сĕтелсем» ирттернĕ.

Институт кун-çулĕ пултаруллă ăсчахсем тунă пысăк çитĕнӳсемпе палăрса тăрать, кунта И.Д.Кузнецов, П.Г.Григорьев, Т.М.Матвеев, Е.З.Захаров, К.В.Элле, В.Г.Егоров, М.Я.Сироткин, Н.Р.Романов, Т.Г.Гусев, Д.Е.Сапожников, Н.А.Ургалкина, А.А.Трофимов, В.А.Нестеров, В.Д.Дмитриев, В.Ф.Каховский, Ю.Н.Исаев, П.С.Краснов, В.Н.Викторов, Т.И.Петрова, Л.Г.Федорова, Э.Я.Дмитриева тата ыттисем те нумай вăй хунă, чылайăшĕ паян та наука аталанăвне хăйĕн тӳпине хывать.

1989 çулхи пуш уйăхĕнчен пуçласа 2010 çулхи ака уйăхĕччен ЧПГĂИне экономика ăслăлăхĕсен докторĕ С.Р.Малютин, искусствоведени докторĕ А.А.Трофимов тата истори ăслăлăхĕсен докторĕ В.С.Григорьев ертсе пынă. Тепĕр тапхăрта: 2016-2024 çулсенче институт директорĕ – философи ăслăлăхĕсен кандидачĕ П.С.Краснов пулнă; 2010-2016, 2024 çултанпа – филологи ăслăлăхĕсен докторĕ Ю.Н.Исаев директорта.

* * *

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн вырăнĕ Раççей Федерацийĕн ăслăлăх анлăхĕнче уйрăм пĕлтерĕшлĕ: вăл çĕршывра чăваш чĕлхин, литературипе фольклорăн, чăваш халăхĕн тата Чăваш Республикин истори, социологи, этнологипе искусство ăслăлăхĕсен теори тата ăслăлăхпа ĕçлевлĕх ыйтăвĕсене пĕтĕмĕшле тĕпчекен учреждени пулса тăрать, нумай профильлĕ ăслăлăх центрĕн ĕçĕсене пурнăçлать. 2006 çултанпа – «Чувашский гуманитарный вестник», 2025 çултанпа «Хальхи гуманитаристика» ăслăлăх журналĕ 3 чĕлхепе /вырăсла, акăлчанла тата чăвашла/ тухса тăрать. Унта тăван çĕршыв тата ют çĕршыв тĕпчевçисем хăйсен статйисемпе пĕлтерĕвĕсене,

рецензисене пичетлеççĕ. 2012 çултанпа учреждени «Ăс-хакăл-Знание» ятпа хаçат кăларса тăма пуçланă.

Институт Чăваш Республикинчи пултарулăх пĕрлĕхĕсемпе, аслă шкулсемпе тачă çыхăнса ĕçлет, Раççейри нумай хулан наука учрежденийĕсемпе хутшăнусене анлăлатать, унăн сотрудникĕсем ют çĕршывсенче иртекен ăслăлăх форумĕсене час-часах хутшăнаççĕ.

ЧПГĂИ пĕлтерĕшлĕ структури – ăслăлăх архивĕ. Унăн фондĕнче чăваш этносĕн, çĕршыври ытти халăхсен историйĕпе культури çинчен калакан 15 пин ытла единица. Ăслăлăх архивĕн хыпарлав пĕлтерĕшĕ чăннипех те пысăк капашлă. Унта – ăсчахсемпе писательсем, ăслăлăхпа культура ĕçченĕсен харпăр архивĕсем, пĕтĕмĕшле ăслăлăх экспедицийĕсен тата археологи разведкисен материалĕсем, сăн ӳкерчĕксемпе карттăсем, кил-тĕрĕшри искусствăн предмечĕсем, картинăсем, композиторсен нота хайлавĕсем, фонограф карас йĕрке çине çырса хунă чăваш юрри-кĕвви, «Хыпар» хаçатăн малтанхи номерĕсем, сайра тĕл пулакан кĕнекесем, Чăваш Республикинче çуралса ӳснĕ паллă çынсен харпăр япалисем, статистика пуххисем тата ытти те. Унта упранакан ал çыру пуххисем хаклă материал шутланаççĕ. Институтра пуян библиотека пур, редакципе издательство пайĕ ĕçлет.

Института «Хисеп Палли» орденпа /1980/ тата Чăваш Республикин Хисеп хучĕпе /2005/, Чăваш Республикин Президенчĕ Тав хучĕпе /2010/ наградăланă.

Паянхи кун институт çак енсемпе ĕçлет: археологи, истори, искусствоведени, филологи, наука библиотеки тата наука архивĕ, редакципе издательство пайĕ.

Археологсем кашни çулах чул, бронза тата пуçламăш тимĕр ĕмĕрĕсенчи, çавăн пекех пуçламăш тата юлашки Вăтам ĕмĕрсенчи палăксене тĕпчес тĕлĕшпе нумай ĕç тăваççĕ. Истори тĕлĕшпе тăрăшакан ученăйсем Вăтам ĕмĕрсенчен пуçласа паянхи ĕмĕр таранах тĕпчесе наука ĕçĕсем çыраççĕ. Институт ученăйĕсен наука ĕçĕсене – монографисене, брошюрăсене, наука доклачĕсене, сборниксене тата ытти материала, истори очеркĕсене, сочинени пуххисене пичетлесе кăларассине ăнăçлă туса пыраççĕ.

Чăваш патшалăх гуманитари ăслăлăхĕсен институчĕн паянхи кун-çул таппи çинчен тата малашлăхри планĕсем пирки институт директорĕнчен Юрий Исаевран илнĕ интервьюра çак темăсене туллин çутатрăмăр.

– Паянхи институтăн аталану çул-йĕрĕ мĕнле принципсемпе йĕркеленсе пырать?

– Пĕрремĕшĕ: тĕллевсем пысăк пулмалла. Наукăн аталанăвĕ тата хайне майлă кăшкарĕ – ăна тĕнчери наука тытăмĕ палăртать: РИНЦ /Раççейри наука тĕпчевĕсене справкăпа библиографин çĕнĕлĕхĕсемпе тивĕçтересси/. Эпир тĕрлĕ наука ĕçĕ /статьясем, докладсем, монографисем/ çырма пултаратпăр, анчах ăна ыттисем вулаймаççĕ пулсан усси сахал. Унпа усă курмаççĕ, цитатăсем илсе кăтартмаççĕ пулсан тĕшши сахал. Çавăнпа та пирĕн:

1/ хальхи вăхăтра историксемпе пурнăçламалли çак пысăк ĕçсене палăртнă: чăваш халăх историйĕ пирки калас пулсан, ăсчахсем авалтан паянхи кунччĕн мĕн çырнă, çавна шыраса тупса, ревизилесе çĕнĕ меслетсемпе усă курса пилĕк çул хушшинче 1-2 кĕнеке монографи çырса кăларас тĕллев пур пирĕн. Ку ĕçе 10–15 çынна хутшăнтарса, кашнине уйрăм тапхăр уйăрса парса ĕçлеттермелле;

2/ этнологсен мифологипе çыхăннă монографи кăлармалла. Чăваш мифологийĕ ăçтан пуçланса кайнă? Мĕнле паха енĕсем пур унăн? Ытти халăхăннипе танлаштарсан мĕнле уйрăмлăхсем, пĕр пеклĕхсем пур? Эпир мĕнпе пуян? Мифологи, пĕтĕмĕшле илсен, вăл – пирĕн халăхăн ĕлĕкхи шухăш пуянлăхĕ. Пурнăçăн тĕрлĕ енне сăнлакан культура палăкĕ.

3/ чĕлхеçĕсем тĕлĕшпе. Литература чĕлхин тытăмне тишкересси. Чăваш чĕлхин йĕрки темелле. Ку проектра 6-7 монографи пулмалла: лексикологи, морфологи, синтаксис, чĕлхе историйĕ. Эпир ку тарана 4 кĕнекине кăлартăмăр тата малалла хатĕрлетпĕр.

– Орфографи пирки, словарь пирки мĕн калăр?

– Орфографи пирĕн пур вăл, эпир ăна 1991 çулта йышăннă. Кăштах юсамалла. Орфографи комиссине Чăваш Республикинчи Вĕрентӳ министерстви ертсе пырать. Çав комиссие чĕлхеçĕсем кăна пуçтарăнман, унта литераторсем те, публицистсем те, культура ĕçченĕсем те пур. Пурте пĕрле килĕшсе татăлса тумалли йĕрке вăл. Словарьне хатĕрлесе çитернĕ. Кăçал е тепĕр çул пичетленсе тухмалла.

Орфографи чĕлхе ытти саккунĕнчен мĕнпе уйрăлса тăрать-ха? Вăл общество шухăшĕпе килĕшӳллĕ пулмалла. Словарь чĕлхе саккунĕсене пăхăнмасса та пултарать, е тавлашуллă пулăмсене татса парас тесен пĕр-пĕр килĕшӳ тума та пултарать. Орфографи комиссийĕ çавăн пек çураçуллă килĕшӳ тума пултаракан орган вăл. Сăмахсене пĕрле е уйрăм çырас ыйтупа пăтăрмахсем те пулкаларĕç. Ку проблемăсем пирĕн кăна мар, ытти тĕрĕк халăхĕн – тутарсен те пур – общество килĕшсе татăлаймасть-ха. Нимĕçсен те çук мар. Ку ыйтусене туйăм шайĕнче мар, шухăш, ăс-тăн шайĕнче татса памалла.

– Мĕнле çĕнĕлĕхсем пур институтăн кулленхи ĕçĕнче тата археологсен





экспедицийĕсем мĕн çĕнни илсе килчĕç?

– Археологи экспедицийĕсем ирттерме пирĕн хамăрăн тĕллевлĕ вырăнсем пур: Елчĕк округĕнчи Таяпа хулашĕ тата Патăрьел округĕнчи Тикеш хулашĕ. Вĕсем – Пăлхар тапхăрĕнчи хула вырăнĕсем. Çав вырăнта çынсем нумай пурăннă. Патăрьел округĕн пуçлăхĕ Рудольф Селиванов Тикешре халĕ музей тăвасшăн. Паллах, унта ученăйсем тăрăшнипе кăна мар, вырăнти вăйсене çĕклесе туристсем пырса çӳремелли илĕртӳллĕ вырăн пулмалла. Паллах ĕнтĕ, истори объекчĕсем унта тĕп вырăн йышăнĕç, çав вăхăтрах туристсем валли кафе, сувенирсен лавкки тата ытти те пулĕ. Тата тепĕр объект пирки те калас тетĕп. Кăçал пирĕн археологсем Çĕрпӳ районĕнче 12 пин çул каялла пурăннă йăх вырăнне тупрĕç: çĕçĕсем, пулă тытмалли хатĕрсем, шăмăсем. Паянах калама пултараймастпăр-ха, кăштахран – ДНК шайĕнчи тĕрлĕ тĕпчев туса – çав вырăнта мĕнле халăх пурăннине уçăмлатма пултаратпăр. Раççей шайĕнчи пĕлтерĕшлĕ объект. Нумай кăсăк артефакт тупрăмăр. Халь унпа малалла ĕçлетпĕр. Паянхи кун Шупашкар хулин авалхи вырăнĕнче тĕрлĕ обьект пур, унта чаватпăр.

– Пăлхар тата Сăвар хулисен вырăнĕсенче экспедицисем ирттеретĕр-и?

– Тутар археологĕсем чаваççĕ, пире пĕрле чĕнеççĕ, эпир хаваспах каятпăр вĕсем патне. Эпир те вĕсене хамăрăн объектсенче пĕрле ĕçлеме чĕнетпĕр. Сăмахран, Çĕрпӳ районĕнчи объекта чавнă чухне Раççейри 12 хуларан пирĕн ĕçтешсем килчĕç, çав шутра Мускавран та. Çавăн пек пĕрлешсе ĕçлени пире, ученăйсене, тĕрĕс пĕтĕмлетӳ тума май парать.

– Ытти республикăри тĕпчев институчĕсемпе туслă çыхăнусем аталанаççĕ-и?

– Эпир халĕ пĕлтĕрпе кăçал питĕ мăнаçлă конференцисем ирттерме пуçларăмăр: пĕрне Тăван çĕршывăн Аслă вăрçи Çĕнтерӳпе вĕçленнĕренпе 80 çул çитнине халалласа, тепри – «Славянсемпе тĕрĕксен пĕрлĕхĕ тата историпе хальхи пурнăç тăрăмĕ» темăпа. Ăна 2 çул та ирттертĕмĕр. Унта 12 çĕршывран килчĕç, – Раççей Федерацийĕн, хамăрăн республикăн. Пурĕ 200 ытла çын, пĕрле хутшăнса ĕçлетпĕр, сборниксем кăларатпăр. Тепĕр çул тата ирттересшĕн планлатпăр.

Хамăра та час-часах йыхрав яраççĕ. Эдуард Лебедев филологпа иксĕмĕр çак кунсенче Алтай Республикине тухса каятпăр. Унта та çавăн пек конференци ирттереççĕ. Эпир хамăрăн чăваш культури пирки тĕрлĕ тематикăпа докладсем тăватпăр. Эпĕ, калăпăр, чăвашсем XVIII-XX ĕмĕрсенче çын вилсен ăна мĕнле йăла-йĕркепе пытарни çинчен. Çав йăла-йĕркере тĕрлĕ йывăç материалĕсемпе мĕнле тĕллевпе усă курни – тупăк, хĕрес тăвасси; вилене мĕнле çуни; çимĕк умĕн вăрмантан симĕс çулçăллă туратсем татса килсе чӳречесен хушшине хурасси; мĕншĕн ăвăсран тупăк тума юраман? Мифра Иуда ăвăс çинче çакăнса вилнĕ иккен. Турă Амăшĕн курăкĕ, сухан мĕне пĕлтерни тата ытти те.

– Умри тĕллевсем пирки каласа пама ыйтасшăн.

– Тĕллевсем пысăк: наука ĕçĕсем – монографисем çырма палăртнă. Чи пĕрремĕш тĕллевĕ – пирĕн ăсчахсен ĕçĕсем ыттисемшĕн – Раççейри, тĕнчери ученăйсемшĕн – яланах кăсăклă пулмалла. Хальхи вăхăтра ДНК тата биометри тĕпчевĕсене алла илсе, пĕрлештерсе хамăрăн халăхăн историне тĕрĕс хаклама вĕренесси.

– Литература процесне те сăнаса пыратăр вĕт-ха. Тĕрĕк тата монгол халăхĕсен антологине чăваш авторĕсен хайлавĕсене вырнаçтаратăр. Миçемĕш кăларăм пулчĕ кăçал тата малалла ĕçлесшĕн-и ку тĕлĕшпе?

– Пĕтĕм Раççей Федерацийĕнче пурăнакан халăхсен литературине хисеплесе кĕнеке редакцийĕ Пĕтĕм Мускав шайĕнче антологи кăларма пуçларĕ. Хальччен пурĕ 7 антологи тухрĕ ĕнтĕ. Унта проза, поэзи, ача-пăча литератури, драматурги, публицистика жанрĕсемпе çыракансен хайлавĕсене кĕртнĕ. Çав 7 кăларăмра чăваш писателĕсен хайлавĕсем те пур. Вĕсен списокне ятарлă комисси пăхса тухса çирĕплетнĕ.

Людмила САЧКОВА.